27-мěш çул тухать. Хакě 20 пус.

1945
ЯНВАРЬ
25
КĚÇНЕРНИКУН
16(6767) №

Чăваш Коммуни

Пěтěм тěнчери пролетарисем, пěрлешěр!

ВКП(б) ОБКОМĚПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĚН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĚН
ТАТАШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧĚН
ХАÇАЧĚ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĚ

Белоруссири 1-мěш фронт çарěсен командующине
Совет Союзěн Маршалне ЖУКОВА
Фронт штабěн начальникне
Генерал-полковника МАЛИНИНА

БЕЛОРУССИРИ 1-мěш фронт çарěсем, ăнăçлă наступлени туса пырса, паян, январěн 23-мěшěнче, çăмăллăн куçса çÿрекен чаçсем аякран çавăрса илмелли маневр туса тата фронтран атакăласа, **БЫДГОЩ (БРОМБЕРГ)** хулине — чугун çулсемпе шоссе çулěсен паха узелне тата нимěçсен Висла шывěн анат тăрăхěнчи оборонин хăвталăн тěреклетнě пунктне—туртса илнě.

ВЫДГОЩ (БРОМБЕРГ) хулине туртса илессишěн çапăçнă чухне çаксем чапа тухнă: **БЕЛОВ** генерал-полковникăн, **АНТИПЕНКО** генерал-лейтенантăн, **ПЕРХОРОВИЧ** генерал-майорăн çарěсем; танковăй çарсен генерал-полковникěн **БОГДАНОВĂН**, танковăй çарсен генерал-лейтенанчěн **ОРЕЛĂН**, танковăй çарсен генерел-майорěн **ВЕДЕНЕЕВĂН**, танковăй çарсен генерал-майорěн **ТЕЛЯКОВĂН**, танковăй çарсен генерал-лейтенанчěн **КРИВОШЕИНАН**, **КОПЫЛОВ** полковникăн, **ПОТАПОВ** полковникăн, **ЧЕРЯПКИН** полковникăн, **ШАМАРДИН** полковникăн, **РЫБКИН** подполковникăн, **БАБИЧЕВ** подполковникăн, **БУГАЕНКО** майорăн, **ГУРЕНКО** майорăн, **КОЧКАРЕНКО** майорăн танкисчěсем; **КРЮКОВ** генерал-лейтенантăн, **ЯГОДИН** генерал-майорăн, **МИЛЛЕРОВ** генерал-майорăн, **КУРСАКОВ** генерал-майорăн кавалерисчěсем; артиллери генерал-полковникěн **КАЗАКОВĂН**, артиллери генерал-майорěн **ПЛАСКОВĂН**, артиллери генерал-майорěн **ЛЯРСКИН**, артиллери генерал-майорěн **БОГДАШЕВСКИН**, **МАКСИМОВ** полковникăн, **ИГНАТЬЕВ** полковникăн, **ГРЕХОВ** полковникăн, **КОЛОКОЛОВ** полковникăн, **КОРЧАГИН** полковникăн, **ЗАЗИРНЫЙ** подполковникăн, **ВАСИЛЬЕВ** подполковникăн, **ПУЗАНОВ** подполковникăн, **БАТУРИН** подполковникăн, **ШЕРМАН** подполковникăн, **УСТРЕХОВ** майорăн артиллерисчěсем; авиаци генерал-майорěн **ТОКАРЕВĂН**, **КАРЯГИН** полковникăн, **ИСАЕВ** полковникăн, **ТИЩЕНКО** подполковникăн летчикěсем; инженери çарěсен генерал-полковникěн **ПРОШЛЯКОВĂН**, **БЕЛЬСКИЙ** полковникăн, **ВАНДЫШЕВ** полковникăн, **МАСИК** полковникăн, **ДАВИД** подполковникăн, **ЗАМЧАЛОВ** майорăн саперěсем; çыхăну çарěсен генерал-лейтенанчěн **МАКСИМЕНКĂН**, **СМОЛИЙ** полковникăн связисчěсем чапа тухнă.

Тунă çěнтерěве ялан ăха палăртса хăварас тесе, **БЫДГОЩ (БРОМБЕРГ)** хулине туртса илессишěн çапăçнă чухне уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене «**БЫДГОЩСКИ**» тесе ят пама тата орденсемпе награлăлама тăратас.

Паян, январěн 23-мěшěнче, 20 сехетре пирěн Тăван çěршыв столици **МУСКАВ**, икçěр çирěм тăвата тупăпа çирěм хут пěр харăс персе, **БЕЛОРУССИРИ** 1-мěш фронтăн паттăр çарěсене, **БЫДГОЩ (БРОМБЕРГ)** хулине туртса илнěскерсене, Тăван çěршыв ячěпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, **БЫДГОЩ (БРОМБЕРГ)** хулине ирěке кăларассишěн çапăçнăскерсене, питě чаплă çапăçнăшăн **ТАВ ТĂВАТĂП**.

Хамăр Тăван çěршывăн ирěклěхěне никама пăхăнманлăхěшěн çапăçса вилнě геройсене ěмěр-ěмěр мухтав!

Нимěç захватчикěсене — вилěм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзěн Маршалě ***И. СТАЛИН.***

1945 çулхи январěн 23-мěшě. № 245.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĚ

Белоруссири 2-мěш фронт çарěсен командующине
Совет Союзěн Маршалне РОКОССОВСКИЕ
Фронт штабěн начальникне
Генерал-лейтенанта БОГОЛЮБОВА

БЕЛОРУССИРИ 2-мěш фронт çарěсем, малалла наступлени туса пырса, паян, январěн 23-мěшěнче, Хěвелтухăç Пруссири **ВИЛЛЕНБЕРГ**, **ОРТЕЛЬСБУРГ**, **МОРУНГЕН**, **ЗААЛЬФЕЛЬД** тата **ФРАЙШТАДТ** хулисене—çулсен паха узелěсене тата нимěçсен оборонин вăйлă тěреклетнě пункчěсене—çапăçса туртса илнě.

Малта асăннă хуласене туртса илессишěн çапăçнă чухне çаксем чапа тухнă: **ГОРБАТОВ** генерал-полковникăн, **ФЕДЮНИНСКИЙ** генерал-полковникăн, **ГРИШИН** генерал-лейтенантăн, **ИВАШЕЧКИН** генерал-лейтенантăн, **КОКОРЕВ** генерал-лейтенантăн, **КИНОСЯН** генерал-майорăн, **КУЗНЕЦОВ** генерал-лейтенантăн, **УРБАНОВИЧ** генерал-лейтенантăн, **ПОЛЕНОВ** генерал-лейтенантăн, **ФЕТИСОВ** генерал-майорăн, **ТЕРЕНТЬЕВ** генерал-лейтенантăн, **МИХАЛИЦИН** генерал-майорăн, **УКРАИНСКИЙ** полковникăн, **КОНОВАЛОВ** генерал-майорăн, **ТЕЛКОВ** полковникăн, **КРИВЕНЦОВ** полковникăн, **НИКИТИН** генерал-майорăн, **ВЕРЕВКИН** генерал-майорăн, **КАЛЬНИЙ** полковникăн, **ГРЕКОВ** полковникăн, **РАДЫГИН** генерал-майорăн, **БОРЩЕВ** генерал-майорăн, **ЧЕСНОКОВ** полковникăн, **КОЛЧАНОВ** генерал-майорăн çарěсем; артиллери генерал-полковникěн **СОКОЛЬСКИН**, артиллери генерал-майорěн **ВЛАДИМИРОВĂН**, **ВАСИЛЕНКО** полковникăн, **ДОЛИНСКИЙ** подполковникăн, **МЕЛЕНКОВ** полковникăн, **АЛФЕРОВ** полковникăн, **АЙРАПЕТОВ** полковникăн артиллерисчěсем; танковăй çарсен генерал-лейтенанчěн **ЧЕРНЯВСКИН**, танковăй çарсен генерал-полковникěн **ВОЛЬСКИН**, танковăй çарсен генерал-майорěн **СИДОРОВИЧĂН**, танковăй çарсен генерал-майорěн **МАЛАХОВĂН**, танковăй çарсен генерал-майорěн **САХНОН**, танковăй çарсен генерал-лейтенанчěн **ПОПОВĂН**, **СТАНИСЛАВСКИЙ** полковникăн, **ПОКОЛОВ** подполковникăн, **КОЛЕСНИКОВ** подполковникăн, **ПИВНЕВ** подполковникăн, **ДОЛГАНОВ** полковникăн, **МИХАЙЛОВ** полковникăн, **ДАВИДЕНКО** полковникăн, **ОПАРИН** полковникăн, **КОНОНЦЕВ** подполковникăн, **КАРТАШЕВ** подполковникăн, танковăй çарсен генерал-майорěн **КИСЕЛЕВĂН**, **ЗИРКА** подполковникăн, **ЖАБИН** майорăн танкисчěсем; инженери çарěсен генерал-майорěн **БЛАГОСЛАВОВĂН**, инженери çарěсен генерал-майорěн **ЖИЛИНĂН**, **ДУГАРЕВ** полковникăн саперěсем; çыхăну çарěсен генерал-майорěн **БОРЗОВĂН**, çыхăну çарěсен генерал-майорěн **МИШИНĂН**, **БАХИЛИН** полковникăн, **МИНИН** полковникăн связисчěсем чапа тухнă.

Тунă çěнтерěве ялан ăха палăртса хăварас тесе, **ВИЛЛЕНБЕРГ**, **ОРТЕЛЬСБУРГ**, **МОРУНГЕН**, **ЗААЛЬФЕЛЬД** тата **ФРАЙШТАДТ** хулисене туртса илессишěн çапăçнă чухне уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, январěн 23-мěшěнче, 21 сехетре пирěн Тăван çěршыв столици **МУСКАВ**, икçěр çирěм тăвата тупăпа çирěм хут пěр харăс персе, Белоруссири 2-мěш фронтăн паттăр çарěсене, малта асăннă хуласене туртса илнěскерсене, Тăван çěршыв ячěпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене Хěвелтухăç Пруссири малта асăннă хуласене туртса илессишěн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питě чаплă çапăçнăшăн **ТАВ ТĂВАТĂП**.

Хамăр Тăван çěршывăн ирěклěхěпе никама пăхăнманлăхěшěн çапăçса вилнě геройсене ěмěр-ěмěр мухтав!

Нимěç захватчикěсене — вилěм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзěн Маршалě ***И. СТАЛИН.***

1945 çулхи январěн 23-мěшě. № 246.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĚ

Белоруссири 3-мěш фронт çарěсен командующине
Арми генералне ЧЕРНЯХОВСКИЕ
Фронт штабěн начальникне
Генерал-полковника ПОКРОВСКИЕ

БЕЛОРУССИРИ 3-мěш фронт çарěсем, тăшман хирěç тăнине çěмěрсе тăкса, **ДАЙМЕ** тата **ПРЕГЕЛЬ** шывěсем урлă каçса кайнă та паян, январěн 23-мěшěнче, **ЛАБИАУ** тата **ВЕЛАУ** хулисене—нимěçсен оборонин **КЕНИГСБЕРГ** хули патне пымалли вырăнсене хÿтěлекен тěреклетнě паха пункчěсене—туртса илнě.

Çакăнпа пěр вăхăтрах фронт çарěсем **ИНСТЕРБУРГ** хулинчен кăнтăртарахра **ДАРКЕМЕН**, **БЕНКХАЙМ** тата **ТРОЙБУРГ** хулисене—нимěçсен оборонин вăйлă тěреклетнě пункчěсене—çапăçса туртса илнě.

ДАЙМЕПЕ ПРЕГЕЛЬ шывěсем урлă каçассишěн тата малта асăннă хуласене туртса илессишěн çапăçнă чухне çаксем чапа тухнă: **ГАЛИЦКИЙ** генерал-полковникăн, **ЛУЧИНСКИЙ** генерал-лейтенантăн, **БЕЛОБОРОДОВ** генерал-лейтенантăн **ЧАНЧИБАДЗЕ** генерал-лейтенантăн, **ШАФРАНОВ** генерал-лейтенантăн, **СЕМЕНОВ** генерал-лейтенантăн, **РОГАЧЕВСКИЙ** генерал-майорăн, **МАСЛЕННИКОВ** генерал-майорăн, **ЛЕВИН** генерал-майорăн, **ЩЕДРИН** генерал-майорăн, **ЗАВАДОВСКИЙ** генерал-лейтенантăн, **ГУРЬЕВ** генерал-майорăн, **АЛЕКСАНДРОВ** генерал-майорăн, **БАТИЦКИЙ** генерал-майорăн, **МИССАН** генерал-лейтенантăн, **КСЕНОФОНТОВ** генерал-лейтенантăн, **АРУШАНЯН** генерал-майорăн, **ЛЮХТИКОВ** генерал-майорăн, **КНЯЗЬКОВ** генерал-майорăн, **ПРОВАЛОВ** генерал-майорăн çарěсем; артиллери генерал-полковникěн **БАРСУКОВĂН**, артиллери генерал-лейтенанчěн **НИЛОВСКИН**, артиллери генерал-майорěн **ЩЕГЛОВĂН**, артиллери генерал-майорěн **ПЕТРОПАВЛОВСКИН**, артиллери генерал-лейтенанчěн **СТРЕЛЬБИЦКИН**, артиллери генерал-майорěн **СЕМИНĂН**, артиллери генерал-майорěн **ПОПОВĂН**, артиллери генерал-лейтенанчěн **СЕМЕНОВĂН**, артиллери генерал-майорěн **ЯКОВЛЕВĂН**, артиллери генерал-майорěн **КОЛОТИЛОВĂН**, **СТРУЕВ** полковникăн артиллерисчěсем; танковăй çарсен генерал-полковникěн **РОДИНĂН**, танковăй çарсен генерал-лейтенанчěн **БУТКОВĂН**, танковăй çарсен генерал-лейтенанчěн **БУРДЕЙНЫЙĂН**, **БОНДАРЕНКО** полковникăн, **МАКАРКИН** подполковникăн, **КУЛИКОВ** полковникăн, **ГОВОРОВ** подполковникăн, **КОБЫЛЯНСКИЙ** майорăн танкисчěсем; авиаци генерал-полковникěн **ХРЮКИНĂН**, **ПРУТКОВ** полковникăн, **ХАТМИНСКИЙ** полковникăн, **ЗАКЛЕП** подполковникăн, авиаци генерал-майорěн **МОЛОКОВĂН**, авиаци генерал-майорěн **ШЕВЧЕНКĂН**, авиаци генерал-майорěн **ЗАХАРОВĂН**, **ЗИМИН** полковникăн, **ДЕЛЬФИНО** майорăн летчикěсем; инженери çарěсен генерал-лейтенанчěн **БАРАНОВĂН**, инженери çарěсен генерал-майорěн **ЗВЕРЕВĂН**, инженери çарěсен генерал-майорěн **ЖИРОВĂН**, **ЛЕВИН** полковникăн, инженери çарěсен генерал-майорěн **КОЛМАКОВĂН** саперěсем; çыхăну çарěсен генерал-лейтенанчěн **БУРОВĂН**, **ЗАХАРОВ** полковникăн, **ДАВЫДЕНКО** полковникăн, **ПЛОТКИН** полковникăн, çыхăну çарěсен генерал-майорěн **КОКОРИНĂН**, **БЕЛЫШЕВ** полковникăн связисчěсем чапа тухнă.

Тунă çěнтерěве ялан ăха палăртса хăварас тесе, **ДАЙМЕ** шывěпе **ПРЕГЕЛЬ** шывě урлă каçассишěн тата **ЛАБИАУ**, **ВЕЛАУ**, **ДАРКЕМЕН**, **БЕНКХАЙМ**, **ТРОЙБУРГ** хулисене туртса илессишěн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, январěн 23-мěшěнче, 22 сехетре пирěн Тăван çěршыв столици **МУСКАВ**, икçěр çирěм тăвата тупăпа çирěм хут пěр харăс персе, Белоруссири 3-мěш фронтăн паттăр çарěсене, **ДАЙМЕ** шывěпе **ПРЕГЕЛЬ** шывě урлă каçса кайнăскерсене тата малта асăннă хуласене туртса илнěскерсене, Тăван çěршыв ячěпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, **ДАЙМЕ** шывěпе **ПРЕГЕЛЬ** шывě урлă каçассишěн тата малта асăннă хуласене туртса илессишěн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питě чаплă çапăçнăшăн **ТАВ ТĂВАТĂП**.

Хамăр Тăван çěршывăн ирěклěхěпе никама пăхăнманлăхěшěн çапăçса вилнě геройсене ěмěр-ěмěр мухтав!

Нимěç захватчикěсене — вилěм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзěн Маршалě ***И. СТАЛИН.***

1945 çулхи январěн 23-мěшě. № 247.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĚ

Украинăри 1-мěш фронт çарěсен командующине
Совет Союзěн Маршалне КОНЕВА
Фронт штабěн начальникне
Арми генералне СОКОЛОВСКИЕ

УКРАИНĂРИ 1-мěш фронт çарěсем, Силезире нимěçсем хирěç тăнине çěнтерсе пырса, паян, январěн 23-мěшěнче, **МИЛИЧ**, **БЕРНШТАДТ**, **НАМСЛАУ**, **КАРЛЬСМАРКТ**, **ТОСТ** тата **БИШОФСТАЛЬ** хулисене—çулсен паха узелěсене тата нимěçсен оборонин тěреклетнě пункчěсене—туртса илнě те **БРЕСЛАУ** хули районěнче 60 километр сарлакěш участокра **ОДЕР** шывě çине тухнă.

ОДЕР шывě çине тухассишěн тата малта асăннă хуласене туртса илессишěн çапăçнă чухне çаксем чапа тухнă: **ЖАДОВ** генерал-полковникăн, **КОРОТЕЕВ** генерал-полковникăн, **ЛЯМИН** генерал-майорăн, **КОЛОМИНОВ** генерал-майорăн, **РОДИМЦЕВ** генерал-лейтенантăн, **ЛЕБЕДЕНКО** генерал-лейтенантăн, **БАКЛАНОВ** генерал-майорăн, **МАРТИРОСЯН** генерал-майорăн, **АКИМОВ** генерал-лейтенантăн çарěсем; **РЫБАЛКО** генерал-полковникăн, **ЛЕЛЮШЕНКО** генерал-полковникăн, танковăй çарсен генерал-майорěн **БАХМЕТЬЕВĂН**, танковăй çарсен генерал-майорěн **УПМАНĂН**, танковăй çарсен генерал-майорěн **КУЗНЕЦОВĂН**, танковăй çарсен генерал-майорěн **НОВИКОВĂН**, танковăй çарсен генерал-майорěн **ИВАНОВĂН**, **ОРЛОВ** полковникăн, **ЧУПРОВ** полковникăн танкисчěсем; **БАРАНОВ** генерал-лейтенантăн кавалерисчěсем; артиллери генерал-майорěн **ПОЛУЭКТОВĂН**, артиллери генерал-майорěн **ФАУСТОВĂН**, артиллери генерал-майорěн **ОГАНЕСЯНĂН**, артиллери генерал-майорěн **МЕНТЮКОВĂН** артиллерисчěсем; авиаци генерал-полковникěн **КРАСОВСКИН** летчикěсем; инженери çарěсен генерал-лейтенанчěн **ГАЛИЦКИН**, **ПОДОЛЬННЫЙ** полковникăн, **ГЛЕЗЕР** полковникăн, **КАМЕНЧУК** полковникăн, **ПОЛУЭКТОВ** полковникăн саперěсем; çыхăну çарěсен генерал-лейтенанчěн **БУЛЫЧЕВĂН**, Государство Хăрушсăрлăх подполковникěн **ГРИБĂН** связисчěсем чапа тухнă.

Тунă çěнтерěве ялан ăха палăртса хăварас тесе, **ОДЕР** шывě çине тухассишěн тата **МИЛИЧ**, **БЕРНШТАДТ**, **НАМСЛАУ**, **КАРЛЬСМАРТ**, **ТОСТ**, **БИШОФСТАЛЬ** хулисене туртса илессишěн пынă çапăçусенче уйрăмăнах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, январěн 23-мěшěнче, 20 сехетре пирěн Тăван çěршыв столици **МУСКАВ**, икçěр çирěм тăвата тупăпа çирěм хут пěр харăс персе, **Украинăри 1-мěш фронтăн паттăр çарěсене**, **ОДЕР** шывě çине тухнăскерсене тата малта асăннă хуласене туртса илнěскерсене, Тăван çěршыв ячěпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, **ОДЕР** шывě çине тухассишěн тата нимěç Силезинчи асăннă хуласене туртса илессишěн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питě чаплă çапăçнăшăн **ТАВ ТĂВАТĂП**.

Хамăр Тăван çěршывăн ирěклěхěпе никама пăхăнманлăхěшěн çапăçса вилнě геройсене ěмěр-ěмěр мухтав!

Нимěç захватчикěсене — вилěм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзěн Маршалě ***И. СТАЛИН.***

1945 çулхи январěн 23-мěшě. № 248.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĚ

Украинăри 2-мěш фронт çарěсен командующине
Совет Союзěн Маршалне МАЛИНОВСКИЕ
Фронт штабěн начальникне
Генерал-полковника ЗАХАРОВА

УКРАИНĂРИ 2-мěш фронт çарěсем **МИШКОЛЦ** хулинчен çурçěртерехре наступлени пуçласа янă та, сăртлă-вăрманлă вырăнти йывăр условисенче кěрешсе, нимěçсен вăйлă çирěплетнě оборонине татнă, 20 километр таран малалла кайнă, татса кěнě вырăна фронт сарлакăшěпе 40 километра çити асăлатнă, вара январěн 23-мěшě вěçленнě тěле Чехословаки çěрěнче **РОЖНЯВА** хулипе **ЙЕЛШАВА** хулине—тăшман оборонин тěреклетнě паха пункчěсене—туртса илнě.

Нимěçсен оборонине татассишěн тата **РОЖНЯВА** хулипе **ЙЕЛШАВА** хулине туртса илессишěн çапăçнă чухне çаксем чапа тухнă: **ТРОФИМЕНКО** генерал-полковникăн, **ЖМАЧЕНКО** генерал-лейтенантăн, **БРАГИН** генерал-майорăн, **ШАРАПОВ** генерал-лейтенантăн, **ПЕТРУШЕВСКИЙ** генерал-лейтенантăн, **ГОРЯЧЕВ** генерал-лейтенантăн, **МЕРКУЛОВ** генерал-майорăн, **СЕМЕНОВ** генерал-майорăн, **РУМЯНЦЕВ** генерал-майорăн, **КАРЛОВ** генерал-майорăн, **МИХАЙЛОВ** генерал-майорăн, **ОБУШЕНКО** генерал-майорěн, **УМАНСКИЙ** генерал-майорăн, **ХОХЛОВ** полковникăн, **ГОРОБЕЦ** полковникăн, **ЕРЕМИН** полковникăн, **ЦАЛАЙ** полковникăн, **БОЧКОВ** полковникăн, **САЖИН** полковникăн, **ДРЕМЕНКОВ** полковникăн, **ЩЕРБАКОВ** майорăн, **КАРНАЧЕВ** полковникăн çарěсем; артиллери генерал-полковникěн **ФОМИНĂН**, артиллери генерал-майорěн **ЛЕБЕДЕВĂН**, артиллери генерал-майорěн **КОРЕЦКИН**, артиллери генерал-майорěн **ПОПОВИЧĂН**, **ЛАДИК** полковникăн, **НИКИТИН** полковникăн, **РУСАК** полковникăн, **ГУЩИН** полковникăн, **ВЕРХАЛО** подполковникăн, **ВЛАСЕНКО** подполковникăн, **ЩЕРБИН** майорăн, **ШТУРМАН** подполковникăн, **ЯРГИН** майорăн, **САМЧЕНКО** подполковникăн, **ГЛУШЕНКО** майорăн артиллерисчěсем; танковăй çарсен генерал-полковникěн **КУРКИНĂН**, **СТЫЗИК** полковникăн, **АНТОНОВ** подполковникăн танкисчěсем; авиаци генерал-полковникěн **ГОРЮНОВĂН**, авиаци генерал-лейтенанчěн **СЕЛЕЗНЕВĂН**, авиаци генерал-майорěн **КАМАНИНĂН** летчикěсем; инженери çарěсен генерал-лейтенанчěн **ЦИРЛИНĂН**, инженери çарěсен генерал-майорěн **ПЕТРОВĂН**, **ПОНИМАШ** полковникăн, **БУДАРИН** полковникăн, **ПАВЛЕНКО** полковникăн саперěсем; çыхăну çарěсен генерал-лейтенанчěн **ЛЕОНОВĂН**, **ГОРЕЛКИН** полковникăн, **АГАФОНОВ** полковникăн, Государство Хăрушсăрлăх полковникěн **КАРПОВĂН** связисчěсем чапа тухнă.

Тунă çěнтерěве ялан ăха палăртса хăварас тесе, нимěçсен оборонине татассишěн тата **РОЖНЯВА** хулипе **ЙЕЛШАВА** хулине туртса илессишěн çапăçнă чухне уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, январěн 24-мěшěнче, 20 сехетре пирěн Тăван çěршыв столици **МУСКАВ**, икçěр çирěм тăвата тупăпа çирěм хут пěр харăс персе, Украинăри 2-мěш фронтăн паттăр çарěсене, нимěçсен оборонине татнăскерсене тата **РОЖНЯВА** хулипе **ЙЕЛШАВА** хулине туртса илнěскерсене, Тăван çěршыв ячěпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, нимěçсен оборонине татассишěн тата **РОЖНЯВА** хулипе **ЙЕЛШАВА** хулине ирěке кăларассишěн çапăçнăскерсене, питě чаплă çапăçнăшăн **ТАВ ТĂВАТĂП**.

Хамăр Тăван çěршывăн ирěклěхěпе никама пăхăнманлăхěшěн çапăçса вилнě геройсене ěмěр-ěмěр мухтав!

Нимěç захватчикěсене — вилěм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзěн Маршалě ***И. СТАЛИН.***

1945 çулхи январěн 24-мěшě. № 249.

Совет Информаци Бюровěнчен

ЯНВАРĚН 23-МĚШĚНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

БЕЛОРУССИРИ 3-мěш фронт çарěсем, тăшман хирěç тăнине çěмěрсе тăкса, **ДАЙМЕ** шывěпе **ПРЕГЕЛЬ** шывě урлă каçса кайнă та **ЛАБИАУ** хулипе **ВЕЛАУ** хулине — нимěçсен оборонин **КЕНИГСБЕРГ** хулине пырса кěмелли вырăнсене хÿтěлекен паха пункчěсене—тытса илнě. Çакăнпа пěр вăхăтрах фронт çарěсем **ИНСТЕРБУРГ** хулинчен кăнтăртарахра **ДАРКЕМЕН**, **БЕНКХАЙМ** тата **ТРОЙБУРГ** хулисене — нимěçсен оборонин вăйлă тěреклетнě пункчěсене—çапăçса тытса илнě, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, нимěçсем пурăнакан ытти 700 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—**ЛАБАГИНЕН**, **ГРОСС ПЕППЕЛЬН**, **АДЛИХ БЕРВАЛЬДЕ**, **ГРЮНХАЙН**, **РОМАУ**, **БЮРГЕРСДОРФ**, **КЛАЙН НУР**, **ГРОСС ЭШЕНБУРХ**, **НОРКИТТЕН**, **ШВИРБЕЛЬН**, **ШЕППЕТШЕН**, **ЙУРГАЙТШЕН**, **ТРЕМПЕН**, **КУНИГЕЛЕН**, **КЛАЙН БАЙНУНЕН**, **МЕДУНИШКЕН**, **ЛИССЕН**, **РОГОННЕН**, **ГОЛЛЮБИН**, **КРУПИННЕН**, **ВОЙНАССЕН** ятлă пысăк ялсем тата **ШЕЛЕКЕН**, **ПУШДОРФ**, **КАРЛЬСВАЛЬДЕ**, **ЗОДЕНЕН**, **КЛАЙН БАЙНУНЕН**, **КОЛАУ** чугун çул станцийěсем.

АВГУСТОВ хулинчен кăнтăртарахра тата кăнтăр-хěвеланăçнерехре пирěн çарсем **АВГУСТОВ** каналěпе **БОБР (БЕБЖА)** шывě урлă каçса кайнă та **РАЙГРУД**, **ГРАЕВО**, **ВИЗНА**, **ЕДВОБНЕ** хулисене туртса илнě, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 350 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—**РУДКИ-СТАРЕ**, **КАМИОНКА-СТАРА**, **БАРГЛУВКОСЦЕЛЬНЫ**, **СОЛИСТУВКА**, **ШИМАНЫ**, **КЛИМАШЕВНИЦА**, **РОДЗИЛУВ**, **ПЖИТУЛЫ**, **КОБЫЛИН**, **РОГЕНИЦЕ-ВЕЛЬКЕ** ятлă пысăк ялсем тата **РУДА**, **ГРАЕВО** чугун çул станцийěсем.

БЕЛОРУССИРИ 2-мěш фронт çарěсем, наступлени туса пырса, январěн 23-мěшěнче Хěвелтухăç Пруссири **ВИЛЛЕНБЕРГ**, **ОРТЕЛЬСБУРГ**, **МОРУНГЕН**, **ЗААЛЬФЕЛЬД** тата **ФРАЙШТАДТ** хулисене—çулсен паха узелěсемпе нимěçсен оборонин вăйлă тěреклетнě пункчěсене—çапăçса туртса илнě, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, нимěçсем пурăнакан ытти 600 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—**ЗЕНДРОВЕН**, **ГРОСС ШИМАНЕН**, **ПАССЕНХАЙМ**, **ГРОСС ПУРДЕН**, **ДОЙТЕН**, **ДИТРИХСВЕЛЬДЕ**, **ЛИБЕМЮЛЬ** ятлă пысăк ялсем тата **ГРОСС ШИМАНЕН**, **ГРАММЕН**, **ПАССЕНХАЙМ**, **МЕРТИНСДОРФ**, **КЛАУКЕНДОРФ**, **НАТТЕРН**, **ШЕНФЕЛЬДЕ**, **БИССЕЛЛЕН**, **ВЕРГФРИДЕ**, **ЛИБЕМЮЛЬ**, **ГРОСС АЛЬТЕНГАГЕН**, **ЗОННЕНБОРОН** чугун çул станцийěсем. Çакăнпа пěр вăхăтрах фронт çарěсем Польша çěрěнче **БРОДНИЦА** хулипе чугун çул узелне, **ЛИПНО** хулине туртса илнě, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 450 пункта йышăннă, вăл шутра—**МИКОЛАЙКИ**, **ШАФАРНЯ**, **ГУРАЛЕ**, **ЗБИЧНО**, **КАРБОВО**, **ВРОЦКИ**, **ПУЛВЕСК**, **ВЕНГЕРСК**, **РУДАВ**, **КИКОЛ**, **БЖЕЗЬНО**, **ШПЕТАЛЬ**, **ГУРНЫ** ятлă пысăк ялсем.

(вěçě 2-мěш страницăра).

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Белоруссири 1-мĕш фронт çарĕсен командующине
Совет Союзĕн Маршалне ЖУКОВА
Фронт штабĕн начальникне
Генерал-полковника МАЛИНИНА

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, малалла ăнăçлăн наступлени туса пырса, январĕн 23-мĕшĕ вĕçленнĕ тĕле КАЛИШ хулине—çулсен паха узелĕпе нимĕçсен БРЕСЛАВЛЬ хули енчи оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пунктне — штурмласа туртса илнĕ.

КАЛИШ хулине туртса илессишĕн çапăçнă чухне çаксем чапа тухнă: КОЛПАКЧИ генерал-полковникăн, ЦВЕТАЕВ генерал-полковникăн, ДОБРОВОЛЬСКИЙ генерал-майорăн, ВОРОБЬЕВ генерал-майорăн çарĕсем; КОНСТАНТИНОВ генерал-лейтенантăн, КОБЛОВ генерал-майорăн, ЧАЛЕНКО генерал-майорăн, БЕЛОВ генерал-майорăн кавалерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн КИРИЧЕНКĂН, КУЗНЕЦОВ полковникăн, БАРАНЮК полковникăн ШЕМЯКИН полковникăн, СЕКУНДА подполковникăн, БАКЛАНОВ подполковникăн, ГАЦУК подполковникăн, МЯЧОВСКИЙ подполковникăн, ПИСАРЕНКО подполковникăн, СЕРЕГИН майорăн. ТРОЦЕНКО майорăн, МИРОНЕНКО майорăн танкисчĕсем; артиллери генерал-майорĕн ИЗУМРУДОВАН, РАКЧЕЕВ полковникăн, ПУПКОВ полковникăн, ОСТРЕЙКО полковникăн, РЕЗНИКОВ майорăн артиллерисчĕсем; авиаци генерал-майорĕн СИДНЕВАН, авиаци генерал-майорĕн КРУПСКИН, КОВАЛЕВ полковникăн. МИРОНОВ полковникăн, СМИРНОВ полковникăн летчикĕсем; КОРОБЕЙНИЧЕВ подполковникăн. НАЗАРЕНКО подполковникăн саперĕсем; КОГАН подполковникăн, ВОЛКОВ подполковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, КАЛИШ хулине туртса илессишĕн çапăçнă чухне уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăсене «КАЛИШСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, январĕн 24-мĕшĕнче, 21 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, икçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, Белоруссири 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, КАЛИШ хулине туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, КАЛИШ хулине ирĕке кăларассишĕн çапăçнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТАВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1945 çулхи январĕн 24-мĕшĕ. № 250.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсен командующине
Совет Союзĕн Маршалне КОНЕВА
Фронт штабĕн начальникне
Арми генералне СОКОЛОВСКИЕ

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, танковăй соединенисемпе пехота çав тери хăвăрт атакăланине пула, паян, январĕн 24-мĕшĕнче, нимĕç Силезийĕнчи çар промышленноçĕн паха центрне—ОППЕЛЬН хулине крепоçне—чугун çулсемпе шоссе çулĕсен пысăк узелне тата нимĕçсен ОДЕР шывĕ çинчи оборонин хăватлă тĕреклетнĕ пунктне туртса илнĕ.

Çавăнпа пĕр вăхăтрах фронт çарĕсем БРЕСЛАУ хулинчен çурçĕтерехре Польшăри РАВИЧ хулине тата Германи çĕрĕнчи ТРАХЕНБЕРГ хулине—тăшман оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕсене — туртса илнĕ.

ОППЕЛЬН, РАВИЧ тата ТРАХЕНБЕРГ хулисене туртса илессишĕн çапăçнă чух çаксем чапа тухнă: ЖАДОВ генерал-полковникăн, ПУХОВ генерал-полковникăн, МАЛАНДИН генерал-лейтенантăн, ЛЯМИН генерал-майорăн, БАКЛАНОВ генерал-майорăн, ЧИРКОВ генерал-майорăн, ГОВОРОВ генерал-майорăн çарĕсем; РЫБАЛКО генерал-полковникăн, ЛЕЛЮШЕНКО генерал-полковникăн, танковăй çарсен генерал-майорĕн БАХМЕТЬЕВАН, танковăй çарсен генерал-майорĕн УПМАНАН, танковăй çарсен генерал-майорĕн НОВИКОВАН, танковăй çарсен генерал-майорĕн ИВАНОВАН, ЧУПРОВ полковникăн, ОРЛОВ полковникăн, БОГДАНОВ полковникăн, КУЛИКОВ полковникăн, ГОЛОВАЧЕВ полковникăн, ЧУГУНОВ полковникăн танкисчĕсем; артиллери генерал-майорĕн ОГАНЕСЯНАН, артиллери генерал-майорĕн ПОЛУЭКТОВАН артиллерисчĕсем; авиаци генерал-лейтенанчĕн РЯЗАНОВАН, авиаци генерал-лейтенанчĕн УТИНАН, ГОРЕГЛЯД подполковникăн летчикĕсем; КАМЕНЧУК полковникăн, ПОДОЛЫННЫЙ полковникăн, ЗАГОРОДНИЙ полковникăн саперĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-лейтенанчĕн БУЛЫЧЕВАН, БОРИСОВ полковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, ОППЕЛЬН, РАВИЧ тата ТРАХЕНБЕРГ хулисене туртса илессишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăсене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, январĕн 24-мĕшĕнче, 22 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, икçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, Украинăри 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, малта асăннă хуласене туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, малта асăннă хуласене туртса илессишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТАВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1945 çулхи январĕн 24-мĕшĕ. № 251.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Белоруссири 2-мĕш фронт çарĕсен командующине
Совет Союзĕн Маршалне РОКОССОВСКИЕ
Фронт штабĕн начальникне
Генерал-лейтенанта БОГОЛЮБОВА

БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, малалла наступлени туса пырса, паян, январĕн 24-мĕшĕнче, Хĕвелтухăç Пруссири ЛИКК, НОЙЕНДОРФ тата БИАЛЛА хулисене—нимĕçсен оборонин вăйлăн тĕреклетнĕ пункчĕсене, Хĕвелтухăç Пруссири кÿлĕсен районне пымалли çулсене хÿтĕлесе тăракансенсене,—çапăçса туртса илнĕ.

Çÿлте асăннă хуласене туртса илессишĕн çапăçнă чухне çаксем чапа тухнă: БОЛДИН генерал-полковникăн, ОЗЕРОВ генерал-лейтенантăн, МУЛЬТАН генерал-майорăн, ЗАХАРОВ генерал-лейтенантăн, МАСЛЕННИКОВ генерал-майорăн, КОЗАК полковникăн, ДАЛМАТОВ генерал-майорăн, КРОНИК генерал-майорăн çарĕсем; артиллери генерал-майорĕн ВАСИЛЬЕВАН, артиллери генерал-майорĕн КАСЬЯНОВАН, ЕЛКИН полковникăн, ТУРЧАНИНОВ полковникăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн ЧЕРНЯВСКИН, ШМЫРОВ полковникăн танкисчĕсем; инженери çарĕсен генерал-майорĕн МЕЛЬНИКОВАН саперĕсем; ТЕЙКОВЦЕВ полковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, ЛИКК, НОЙЕНДОРФ тата БИАЛЛА хулисене туртса илессишĕн çапăçнă чухне уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăсене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, январĕн 24-мĕшĕнче, 24 сехетре хамăр Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, çĕр çирĕм тăватă тупăпа вуникĕ хут пĕр харăс персе, Белоруссири 2-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, малта асăннă хуласене туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, Хĕвелтухăç Пруссири малта асăннă хуласене туртса илессишĕн çапăçнă çĕрте пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТАВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1945 çулхи январĕн 24-мĕшĕ. № 252.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, январĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй Командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре калалă тăрăх, Зеттенран çурçĕтерехре (Голланди) союзниксен çарĕсем тăшмана де Линге каналĕ урлă хăваласа янă. Эхтран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре хаяр çапăçусем пыраççĕ.

Союзниксен çарĕсем Рейн облаçĕнчи Борн хулине тата Сен-Витран 3,5 миля хĕвеланăçнерехри Хиндергаузен хулине тăшмантан тасатнă. Уффализпа Сен-Вит çулĕ çинче союзниксем Шеренран 3 миля хĕвелтухăçнерехре ларакан Гуви хулине тăшмантан тасатнă. Союзниксен тепĕр чаçĕсем, Бастоньрен çурçĕр-хĕвелтухăçнелле наступлени туса пыраканскерсем, Ашивель хулине тытса илнĕ те 1,5 миля çурçĕр-хĕвелтухăçнелле куçнă. Бастоньпе Сен-Вит хушшинче çапăçакан чаçсем халĕ Люксембургри Труа Вьержран (Ульфлинген) пĕр мильăран та çывăхрах тăраççĕ, Союзниксем Клерворан 3 миля кăнтăртарахра ларакан Буланж хулине тытса илнĕ. Вильц хулине тăшмантан тасатнă.

Ремихран (Люксембург) кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре тăшманăн Геттинген çывăхĕнче тунă контратакисене сире-сире пăрахнă. Кольмар секторĕн кăнтăр участокĕнче Мюлуз хулипе юнашар ларакан ялсене тăшмантан тасатнă. Союзниксем, малалла куçса пырса, Серне (Зеннгейм) çывăхне çитнĕ. Сернерен кăнтăртарахра тăшмана пĕр вăрмантан хăваласа кăларнă. Пин çынна ытла тыткăна илнĕ.

Битш савăлĕн районĕнче (Лотаринги) тăшман союзниксем хушшине шăтарса кĕме хăтланнă. Союзниксен чаçĕсем хăйсен малти позицийĕсем çине пырса кĕнĕ тăшман отрячĕсене пĕтерсе тăкнă.

Январĕн 23-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле йывăр бомбардировщиксен пысăк соединийĕсем Хĕвеланăç Германири терлĕ объектсене, вăл шутра Дуисбургри нефть заводне, атакăланă.

ПЕРЕМИРИ КИЛЕШĔВЕ ПИРКИ ВЕНГРИРЕ МĔН КАЛАÇÇĔ

ДЕБРЕЦЕН, январĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Çĕрле Мускавран Венгрипе перемири килĕшĕве туни çинчен пĕлтерни Венгри халăхне питĕ хытă хаваслантарнă. Çак ĕçе кунта Венгри историйĕнчи чи пысăк ĕçсенчен пĕри тесе шутлаççĕ, вăл Совет Союзĕ хăй çĕнтерни çĕршыва шеллесе пăхнине пĕлтерет, теççĕ. Социал-демократсен партийĕ организацилленĕ пухура тухса каланă чухне, çав партин лидерĕсенчен пĕри—юстици министрĕ Валентин Агоштон перемири тунăшăн Сталин Маршала тата Совет правительствине тав тунă. Çакна пула, тенĕ вăл, Совет правительстви Венгрие унăн малтанхи правительствисем кĕртсе янă катастрофăран тухма пирвайхи утăм тума май пачĕ. Çав малтанхи правительствăсем Совет Союзĕпе вăрçă пуçласа ячĕç.

Залра пулнă йышлă халăх çак сăмахсене тăвăллăн алă çупса йышăннă. Залра çапла каланисем илтĕннĕ: «Вăрçă пуçлакансене вилĕм» «Преступниксене ответ тыттармалла». «Халăхăн вăхăтлăх правительствин политикине мухтатпăр».

Совет Информаци Бюровĕнчен

ЯНВАРĔН 23-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКĂН ВĔÇĔ

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, ăнăçлăн наступлени туса пырса, январĕн 23-мĕшĕнче, çăмăллăн куçса çÿрекен чаçсем тăшмана аякран кайса çавăрса илсе тата фронтран атакăласа, БЫДГОЩ (БРОМБЕРГ) хулине—чугун çулсемпе шоссе çулĕсен паха узелĕ тата нимĕçсен ВИСЛА шывĕн анат тăрăхĕнчи оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕ пулса тăраканскере— туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, ПАКОШ, СТШЕЛЬНО, СЛУПЦА, ГОЛИНА, КОНИН, ТУРЕК, СЕРАДЗ, БЛАШКИ хулисене тата халăх пурăнакан ытти 600 пункта ытла туртса илнĕ.

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, Силезире нимĕçсем хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, январĕн 23-мĕшĕнче МИЛИЧ, БЕРНШТАДТ, НАМСЛАУ, КАРЛЬСМАРКТ, ТОСТ тата БИШОФСТАЛЬ хулисене—çулсен паха узелĕсемпе нимĕçсен оборонин тĕреклетнĕ пункчĕсене — туртса илнĕ те БРЕСЛАУ хули районĕнче 60 километр сарлакĕш участокра ОДЕР шывĕ çине тухнă, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, нимĕçсем пурăнакан 200 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—ПЕЙСКРЕЧАМ хули тата ШТРАДАМ, АЛЬТ ЭЛЬГУТ, ВАБНИТЦ, БУХВАЛЬД, МИНКЕН, ПАЙШТЕ РВИТЦ, ШАЙДЕЛЬВИТЦ, ШТОБЕРАУ, АЛЬТ ПОППЕЛАУ, РУТЕНАУ, КРЕЙЦВАЛЬД, КЛОСТЕРБРЮКК, ЭЙХХАММЕР, БУРГХОР, ЭРЛЕНБУШ, ШТРАЛЬХЕЙМ ятлă пысăк ялсем. Çакăнпа пĕр вăхăтрах фронт çарĕсем Польша çĕрĕнче ГРАБОВ, ШИЛЬДБЕРГ, ОСТШЕШУВ, КЕМПНО, ТАРНОВИЦ хулисене туртса илнĕ тата халăх пурăнакан ытти 450 пункта ытла çапăçса йышăннă.

КРАКОВ хулинчен кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем çапăçса малалла куçса пынă та Польша çĕрĕнче СТАРЫЙ СОНЧ хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 80 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — СКАВИНА, РАДЗИШУВ, РУДНИК, СУЛКОВИЦЕ, ЯСТЖЕМБЯ, БУДЗЮВ, ЗЕМБЖИЦЕ, СУХА, МАКУВ; БЕНЬКУВКА, КОКУШКА, ЖЕГЕСТУВ ятлă пысăк ялсем.

БУДАПЕШТРА пирĕн çарсем хулан хĕвеланăç пайĕнче (БУДА-ра) хупăрласа илнĕ тăшман чаçĕсене пĕтерсе тăкассишĕн çапăçнă, 25 квартал йышăннă.

БУДАПЕШТРАН кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсен атакисене сире-сире янă, вăйлă çапăçнă хыççăн СЕКЕШФЕХЕРВАР хулине хăварнă.

Январĕн 22-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 56 танкне çĕмĕрсе тăкнă, вăл шутра 30 танк ытла СЕКЕШФЕХЕРВАР районĕнче пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 52 самолетне персе ÿкернĕ.

Валериан Владимирович Куйбышев

Вунă çул каярах большевиксен партипе совет государствишĕн пысăк çухату пулчĕ. 1935 çулхи январĕн 25-мĕшĕнче Гитлерăн троцкистла-бухаринла агенчĕсем тискерĕн вĕлернипе Куйбышевăн ĕмĕрĕ таталчĕ.

Валериан Владимирович Куйбышев пирĕн вăхăтри питĕ те чаплă çын, партипе государствăн пысăк деятелĕ пулнă. Вăл хăйĕн пĕтĕм чун-чĕрине социализмшăн пыракан кĕрешĕве, Ленин—Сталин ĕçне панă.

Çамрăкранах Валериан Куйбышев хăйĕн пурнăçĕн тĕллевне тупнă. Вунпилĕк çула çитиччченех вăл Маркс, Энгельс, Ленин кĕнекисене вулама пуçланă. Çав вăхăтрах вăл вĕренекенсен революциллĕ пухăвĕсене çÿренĕ, вăрттăн тухакан революциллĕ литературăна салатнă. 1904 çулта, 16 çулхи ача чухнех, Омскри социал-демократсен организацине кĕрет те тÿрех большевиксем майлă пулать. Вăл хăй вĕренекен Кадетски корпусра вĕренекенсем хушшинче революциллĕ ĕçсем тăвать, çавăн пекех чугун çул çинче ĕçлекен тата ытти рабочисем хушшинче те революциллĕ ĕçсем туса пырать.

Омскри Кадетски корпусран вĕренсе тухнă хыççăн Куйбышев Петербурга куçать. Унта вăл çарпа медицина академийĕн студенчĕ пулса тăрать. Революциллĕ ĕçе вăл çав вăхăтра тата вăйлăрах хутшăнать. Партин Петербургри комитечĕ хушнă тăрăх, Куйбышев марксистла литература сарнă тата рабочисен боевой дружинисем валли хĕçпăшал куçарса тăнă. Каярахпа вăл хăйĕн Петербургри çав вăхăтри пурнăçне асилсе, ăна «большевик-подпольщикăн пысăк тата хаяр шкулĕ» тесе хакланă.

Революциллĕ ĕçсемшĕн академирен кăларса янă пирки Омска тавăрăннă хыççăн вăл пĕтĕмпех парти ĕçне куçать. Çавăнтанпа ĕнтĕ Куйбышев профессионал-революционер пулса тăрать. Вăл, Омскри РСДРП (большевиксен) Комитечĕн членĕ пулса тăрса, меньшевиксене хирĕç вăйлăн кĕрешет, Омскри суту-илÿпе промышленность служащийĕсем тата рабочийĕсем хушшинче, чугун çул çинче ĕçлекен рабочисем хушшинче забастовкăсене ертсе пырать. Петропавловск хулинче вăл пирвайхи хут партин вăрттăн ĕçлекен организацине туса хурать, Каинскра тата Барабинскра вăл рабочисен пухăвĕсене иртерет, нумай çынсене революци ĕçĕ валли хатĕрлесе пĕтĕçтерет. Куйбышевăн тĕлĕнмелле хастарлăхĕ, вăл революцие çулăмлăн ĕненсе тăни, унăн хăрушсăрлăхĕ тата вăл часах тавçăрса илме пултарни рабочисем хушшинче унăн авторитетне çĕклесе янă.

Вăл пысăк ĕмĕтлĕ çын пулнă. Патшан тискер тĕрмисенче тата ссылкăсенче пулни те унăн çав ĕмĕтне хуçма пултарайман. Куйбышева пирвайхи хут 1906 çулта Омскра, çамрăк революционер 18 çул тултаричченех арестленĕ. Çакăн хыççăн 1917 çулччченех Куйбышев е тĕрмесемпе ссылкăсенче пурăнать е ирĕкре большевиксен ĕçне туса пырать. Куйбышева пурĕ 8 хут арестленĕ. Вăл Томск, Омск, Петербург тата ытти тĕрмесенче те ларнă. Тăватă хут ăна ссылкăна янă: Каинска, Нарыма, Иркутск кĕпĕрнине тата Туруханска. Тĕрмесемпе ссылкăсенче пурăннă чухне те вăл хăйĕн ĕçне пăрахман. Нарымра вăл Свердловпа пĕрле парти кружокĕсемпе парти шкулĕсем уçать, халăх çурчĕ, библиотека, шкулсем тата столовăй уçать.

Тĕрмесемпе ссылкăсенчен ирĕке тухнă вăхăтра Куйбышев Самарта, Харьковра, Петербургра, Вологдăра, Томскра, Петропавловскинче тата ытти хуласенче революциллĕ пысăк ĕçсене хутшăннать. Рабочисем ăна Адамчик ячĕпе, Касаткин е Кукушкин ячĕпе чĕннĕ, ăна пиçĕхсе çитнĕ революционер вырăнне, хăйсен руководителĕ вырăнне шутланă.

Февральти революци хыççăн ссылкăран хăтăлса Куйбышев Самара тавăрăнсан, ăна унти рабочисем хĕрÿллĕн кĕтсе илнĕ. Совет влаçĕшĕн кĕрешнĕ çĕрте Самарти рабочисене Куйбышев ертсе пынă. Вăл çар чаçĕсенче сăмах тухса калать, Хĕрлĕ гварди отрячĕсене туса йĕркелет, меньшевиксемпе



эссерсен контрреволюциллĕ ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларса, массăсене хĕçпăшаллă восстани туса ирттерме хатĕрлет. Çавна пула, Самарти рабочисем, Петроград хыççăн, совет влаçне чи малтан туса хураксенчен пĕрисем пулнă. Самарта революциллĕ комитет туса хунă, ăна Куйбышев ертсе пынă. Кунĕн-çĕрĕн вăл çамрăк совет аппаратне çирĕплетес тĕлĕшпе ĕçлет. Контрреволюциллĕ саботажа хăюллăн тата татăклăн пусарса, хулана хÿтĕлес ĕçе организацилет.

Çав вăхăтра парти Куйбышева Пĕрремĕш Армин политика енĕпе ĕçлекен комиссарĕ туса ярать. Çак çĕнĕ ĕçре, çар ĕçĕнче Куйбышев хăй революцин хĕçпăшаллă вăйĕсене организацилекен пултаруллă çын пулнине кăтартать. Тĕрĕссипе илсен, Пĕрремĕш Армие Куйбышев хăй туса йĕркеленĕ, мĕншĕн тесен унччен çак Арми пĕр-пĕринпе çыхăнман, япăх дисциплинăллă чаçсенчен тăнă пулнă. Куйбышев тăрăшнипе туса хунă дивизисем, час-часах наступление куçса, Чĕмпĕр хулине тытса илнĕ. Çакăн хыççăн Самара хулине тытса илнĕ.

Тăваттăмĕш Армире те Куйбышев хăйне питех те лайăх палăртнă. Реввоенсовет членĕ пулса кунта вăл Советăн паллă полководецĕпе Фрунзепе пĕрле ĕçлет. Çĕпĕртен çав вăхăтра Колчак çарĕ тапăнса килнĕ. Белогвардеецсем Уфа, Белебей, Бугуруслан, Орск, Актюбинск хулисене туртса илнĕ. Парти пĕтĕм çĕршыва: «Пурте Колчака хирĕç», тесе чĕннĕ. Ку ĕнтĕ граждан вăрçи вăхăтĕнчи чи паллă çапăçусенчен пĕри пулнă. Фрунзепе Куйбышев ертсе пыракан Совет çарĕсен Колчак çарне чарса лартмалла пулнă. Вĕсем ертсе пынипе çарăн кăнтăрти групп, хăйĕн паллă контрнаступленине пуçарса ярса, Колчака хыçалтан пырса çапнă та хăвалама пуçланă. Колчака аркатса тăкнă.

Çав 1919 çулта Куйбышев Кировпа пĕрле Астрахань хулине хÿтĕлес ĕçе ертсе пырать, каярах, Туркестан фрончĕ пулса тăрсан, ăна Вăтам Азие яраççĕ. Кунта каллех вăл Фрунзепе пĕрле ĕçлет. Унпа пĕрле ĕçлесе басмачсене, интервентсене, белогвардеецсемпе буржуаллă националистсене çĕмĕрсе, часах вырăнти халăх хушшинче авторитетлă çын пулса тăрать. Вăтам Азири халăхсем Куйбышева вăл Вăтам Азири нациллĕ республикăсенче Совет влаçĕн организаторĕ пулнă пирки те, хăюллă çар начальникĕ пулнă пирки те пĕлсе тăраççĕ.

Çавăн пек пулнă Куйбышев вăрçăн тăвăллă вăхăтĕнче. Çĕнĕ тапхăр — мирлĕ строительство тапхăрĕ килсе тухсан, Куйбышев хăйĕн пĕтĕм вăйне халăх телейĕшĕн кĕрешес ĕçе, çĕршывăн хăватне ÿстерес ĕçе хурать. Парти ăна чи ответлă вырăнсене лартать. Вăл ВКП(б) Центральный Комитечĕн секретарĕ, ЦКК председателĕ тата РКИ Наркомĕ, СССР ВСНХ председателĕ, Госплан председателĕ, Совнаркомăн тата Ĕçпе Оборона Совечĕн председателĕн заместителĕ пулса ĕçленĕ. Партин 11-мĕш съездĕнче ăна Центральный Комитет членне, 1927 çулта ВКП(б) Центральный Комитечĕн Политбюро членне суйланă. Партипе государствăн çак пысăк ĕçĕсене тунă вăхăтра Куйбышев хăйĕн пĕтĕм ĕçне партин тĕп çулйĕрне пурнăçлассине, Совет государствине вăйлатассине пăхăнтарнă. Куйбышев пирĕн çĕршыва экономикăпа çар тĕлĕшĕнчен вăйлатас тĕлĕшпе ĕçлекен çынсенчен пĕри, пирĕн çĕршыва сталинла гениллĕ план тăрăх хăюллăн урăхлатса çĕнетекен çынсенчен пĕри пулнă.

Сталинла пятилеткăсене туса вĕсене пурнăçа кĕртес ĕçре Куйбышев питĕ паллă вырăн йышăнса тăрать. Вăл пирĕн хăватлă çĕршывăн индустриллĕ никĕсне хывакансенчен пĕри пулнă. Çав никĕс ĕнтĕ фашистла Германие хирĕç пыракан хальхи вăрçăра хăйĕн хăватне çав тери чаплăн кăтартса парĕ. Магнитогорск металĕнче, халĕ çар заводне каякансенче, Кузбасран Карагандăна куçакан çĕркăмрăк эшелонĕсенче, электростанцисен энергинче, конвейер çинчен тухакан тупăсем, самолетсем, танксем çинче, фронта халĕ хăватлă совет тылĕ мĕн парать, çавăнта пуринче те Куйбышев ĕçĕсен пайĕ пур.

Çĕнĕ заводсем, фабрикăсем, шахтăсем тата электростанцисем тăвас тĕлĕшпе Куйбышев хĕрÿллĕн ĕçленĕ. Çĕршыври пирвайхи пысăк электростанцисене—Шатура, Волхов, Кашира, Кизел станцисене — тунă çĕре Куйбышев хастарлăн хутшăннă. Индустрин чи пысăк гиганчĕсем—Сталинградри трактор завочĕ, Магнитогорскипе Кузнецкри заводсем, Горькири автозавод, Днепрогес—çаксем пурте Куйбышев хутшăннипе çуралса ÿссе çитĕннĕ. Çав çĕнĕ стройкăсенче вăл пуринче те вăя хурса хастарлăн ĕçленĕ. Вилес умĕн нумай маларах малтан вăл çапла каланă: «Пире хирĕç вăрçă хатĕрленине пирĕн яланах асра тытас пулать, пирĕн политикăпа хуçалăх хăватне ÿстерессишĕн, СССР-ăн оборони ĕçне вăйлатассишĕн пĕрмаях кĕрешсе пырас пулать».

Государствăпа партин паллă деятелĕ, Сталинăн шанчăклă соратникĕ Куйбышев партин тăшманĕсене, пирĕн çĕршыва капитализма каялла таврăс çул çине туртакан халăх тăшманĕсене хирĕç, фашистла Германин агентури пулса тăнă тăшмансене хирĕç пĕтĕм вăйпа кĕрешсе пынă. Тăшмансене вăл çав тери курайман. Çĕршывра «пиллĕкмĕш колонна» тума хăтланакан троцкистла-бухаринла йытăсене хирĕç вăл пĕр пăркаланмасăр кĕрешнĕ. Сутăнчăксене, вĕсен хура чунĕсене Куйбышев тăрă шыв çине кăларса пынă. Ирсĕр бандитсем вара çав тери тискер ĕç умĕнче те чаранса тăман—вĕсем Куйбышева вĕлернĕ, унăн çулăмлă чунне сÿнтернĕ, унăн таса чĕрине тапма чарнă...

Валериан Владимирович Куйбышев вилни çинчен пĕлтерсе, пирĕн партин Центральный Комитечĕ çапла çырнă: «Куйбышев юлташ пролетариллĕ революционерăн, шанчăклă ленинецăн сăнарне, партипе рабочи класăн тăшманĕсемпе нихăçан та килĕшме пултарайман, коммунизм ĕçĕшĕн ним шеллемесĕр кĕрешекен çынăн сăнарне кăтартса парать», тенĕ.

Унăн аслă та çутă пурнăçĕ—миллионшар совет çыннисемшĕн пример пулса тăрать. Куйбышев ячĕ пире хамăр çĕршывăн телейĕпе хăвачĕшĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешме, гитлерла Германие тĕппипех çĕнтерессишĕн кĕрешме чĕнет.

В. ОРЛОВ.

Комсомола кĕреççĕ

ИШЛЕЙ. Çĕньял-Покровскинчи çичĕ çул вĕренмелли шкулти комсомол организацийĕ хăйĕн ретне ÿстерес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлет. Ку майпа шкулта вĕренекенсем хушшинче комсомолăн программипе уставĕ çинчен тата Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче паттăр ĕçсем тунă комсомолецсем çинчен каласусем ирттерчĕç. Çавăн хыççăн вĕренÿре малта пыракан 9 ача комсомола кĕме заявлени пачĕç.

Шкулта медицина сестрисем пулма вĕренмелли кружок организациленĕ. Унта нумай ачасем хавасланса вĕренеççĕ. Халĕ вĕренекенсене сураланнисене малтанхи пулăшу пама, юн юхнине чарма, сурана çыхма вĕрентнĕ.

Çак кунсенче колхоз çамрăкĕсен йĕлтĕрлĕ кроссне хатĕрленсе ирттерчĕç. Йĕлтĕрçĕсен подразделенийĕсене турĕç. Кашни кунах тренировкăсем туса ирттереççĕ. Ку ĕçре те комсомолецсем хастарлăн ĕçлеççĕ, ытти çамрăксене хаваслантарса ертсе пыраççĕ.

Е. ИВАНОВА.

Ногинск районĕнчи колхозниксен пуçарăвне ырласа

ИШЛЕЙ. (Телефонпа). Кунта колхоз председателĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Вĕсем, Мускав облаçĕнчи Ногинск районĕнчи колхозниксен пуçарăвне ырласа, хăйсен районĕнчи МТС-а мунча, 40 çын пурăнмалăх общежити туса пама, МТС картишне йĕркеллĕ тавраш карта тытса пама йышăннă. Çак ĕç валли 400 кубометр йывăç хатĕрлеме пулнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 3—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97. промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00015. Типографи № 1, Управлени полиграфпро промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. ф. 6. 59×42 см. Тираж 10.000 экз.